Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

78 (7820) № ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Çĕр улми кăларасси вĕçленет



*Хирсене çитсен уяр та тирпейлĕ тăракан çут çанталăкпа туллин усă куракансен пит-куçĕсенче савăнăç шевли курсан шăрăх çанталăка пула тухса тăнă çухатусене пăхмасăрах çĕр ĕçченĕ мĕн пуррине вăхăтра пуçтарма тăрăшнине асăрхатăн.*

*Çак кунсенче «ДаАн» обществăра çĕр улми пуссинчи юлашки касăсене кăларса пуçтараççĕ.*

*– Мĕн пур – йăлтах пирĕн, – терĕ бригадир-кладовщица С. Михайлова куçне хиртен илмесĕр.*

*А. Степанов хăйĕн тракторĕпе кăларакан çĕр улмие пуçтарма кунта кунсерен 28 çын тухнă.*

*– Ырă çынна пулăшсан ырă ăс кĕрет. Вырсарни кун «иккĕмĕш çăкăр» пуссинче ĕçсене вĕçлетпĕрех пулĕ, – терĕ çĕр улми пуçтарнă хушăрах Э. Яникова ĕçчен.*

*Общество кăçал виçĕ тĕрлĕ çĕр улми лартнă: «удача», «рокко», «снегирь». Вĕсем пурте ăнса пулнă. Çавăнпа та хирте ĕçлекенсен кăмăлĕ те савăк (сăн ÿкерчĕкре).*

**А. БЕЛОВ сăн ÿкерчĕкĕ.**

## Куллен кирлĕ тавар хакĕсем – тĕп вырăнта

**Пирĕн интервью**

***Чăваш Ен Президенчĕ М. Игнатьев республикăри суту-илÿ лавккисенчи хаксен йĕркелĕвне, муниципалитет нушисем валли тĕрлĕ тавар туянассин тухăçлăхĕн темине тăтăшах кун йĕркинче тытать. Иртнĕ эрнере кунти лару-тăрăва йĕркелеме, тавар туянакансен интересĕсене тĕпе хурса лавккасенчи хаксене йĕркелес ыйтусемпе çийĕнчех мерăсем йышăннă пуçлăхсем хушшинче Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ та пулнăран çак ыйтупа унпа тĕл пулса калаçма шутларăм.***

**– Юрий Александрович, республика пуçлăхĕ социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç хакĕсене ÿстерсе яни вырăнсăррине палăртса унпа пуçарнă кĕрешĕве епле хаклатăр?**

– Малтанах çакна калатăп, пирĕн паянхи кунпа çеç пурăнмалла мар. «Çаврăнăçуллăрах» çынсем вара шăпах кăçалхи шăрăх çу кунĕсем кăларса тăратнă йывăрлăхсемпе укçа туса юласшăн та. Çакна Чăваш Республикин Президенчĕ М. Игнатьев пекех эпĕ те сивлетĕп. Хамăр ĕç-хĕл çине хуçалăрах пăхсан пирĕн хаксене ирĕке ямасăрах йывăрлăхсене çĕнме пулать. Халĕ каланине ăнланса апат-çимĕç таварĕсен, уйрăмах социаллă пĕлтерĕшлисен хакĕсене сăлтавсăр ÿсме парас мар тесе район администрацийĕ тĕллевлĕ ĕçсем туса иртерет. Çакна валли эпир администрацири ответлă специалистсенчен ĕç ушкăнĕ йĕркелерĕмĕр. Социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар хакĕсене чакарассипе пурнăçламалли ĕç планне те çирĕплетрĕмĕр.

Ваккăн тавар сутассипе районта икĕ потребитель обществи ĕçлет: Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсем (вĕсем 42-52 кунлăха апат-çимĕçĕн чакмалла мар саппасне тытаççĕ), тата 15-20 процент пĕчĕк предпринимательство представителĕсем.

Иртнĕ кунсенче Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен предприятийĕсенче ырашпа тулă çăнăхĕсенчен пĕçернĕ çăкăр хакĕсене тĕрĕслерĕмĕр. Çак çулпа кайса çурла уйăхĕн 21-мĕшĕнчен тытăнса хура çăкăр хакне 16 тенкĕрен 14 тенкĕ те 60 пус таран пĕчĕклетме çул тупăнчĕ. Çакăнпа пĕрлех ваккăн тавар сутакан предприятисенче хаксене сăлтавсăр ÿстерессинчен асăрхаттарса ăнлантару ĕçĕсем ирттеретпĕр.

**– Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсен хакĕсем тĕлĕшпе мониторинг йĕркеленĕ-и?**

– Урăхла пулма та пултараймасть. Район администрацийĕ социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсен хакĕсем тĕлĕшпе кашни эрнерех мониторинг ирттерет. Социаллă таварсен перечення Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2007 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче 266-мĕш номерлĕ «Социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç таварĕсен хакĕсем ÿсессине тытса тăмалли мерăсем çинчен» постановленипе çирĕплетнĕ. Унта çак таварсем кĕреççĕ: ыраш çăнăхĕнчен тата тĕрлĕ çăнăхсене хутăштарса пĕçернĕ çăкăр, тулă çăнăхĕ, 3,2 процент çуллă пастеризациленĕ сĕт, 9 процент çуллă тăпăрчă, 2,5 процент çуллă кефир, 15 процент çуллă хăйма, Раççейри вырăх çăвĕ, хĕвел çаврăнăш çăвĕ, çĕр улми.

Мониторинг кăтартăвĕсемпе район хаçатĕнче, администраци сайтĕнче паллашма пулать. Хамăр тунă пĕтĕмлетÿсене эпир ЧР Президент Администрацине, Суту-илÿпе экономика аталанăвĕн министерствине тăрататпăр.

**– Мониторинг районти шкулсемпе сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсене пыракан апат-çимĕç хакĕсем тĕлĕшпе пур-и?**

– Çапла. Муниципаллă нушасем валли туянакан апат-çимĕç продукчĕсен хакĕсем рынокри вăтам виçепе танлашса пыраççĕ. Апла пулсан та кунта заказчиксем туяннă кашни парти çимĕç пиркиех сĕннĕ хаксене епле пăхăнни тĕлĕшпе тĕрĕслевсем ирттеретпĕр.

Иртнĕ çу кунĕсенчи шăрăха пула районта пурăнакансене апат-çимĕçпе тивĕçтерме те районта тĕллевлĕ ĕçсем пыраççĕ. Çакна валли район территорийĕнче канмалли кунсенчи икĕ ярмăркка тата универсаллă пасар ĕçлеççĕ.

Ял хуçалăх предприятийĕсемпе килти хушма хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарма вĕсем иртнĕ вăхăтра (авăн уйăхĕн 7-мĕшĕччен) 1681 тонна фуражлăх тырă, 840 тонна утă, 1524 тонна улăм, 238 тонна хывăх, 361 тонна комбикорм туянчĕç. Çак апат-çимĕç пирĕн района Чул хула, Киров облаçĕсенчен, Мордвапа Мари-Ел Республикисенчен килсе çитрĕ.

Пĕрлехи тăрăшулăхпа производствăна чакармасăрах хĕл каçасса шанатпăр.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Районадминистрацире**

## Ĕçри тăрăшулăхшăн

Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи августăн 27-мĕшĕнчи 668 № йышăнăвĕпе «Муркаш районĕнчи «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономлă учрежени корректорне **Ольга Филипповна СУВОРОВĂНА** тата **Роза Васильевна РЫЖКОВА** техслужащие район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

**Хушу**

## Черетсĕр 43-мĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2010 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнчи 44 № хушăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 43-мĕш ларăвне 2010 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче пухма йышăннă.

Кун йĕркине пăхса тухма çак ыйтусене кĕртнĕ:

1. Депутатсен районти Пухăвĕн 2009 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнчи С-36/2 № «Муркаш районĕн 2010 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен.

2. Муркаш районĕн бюджетне тивĕçтерессине шайлаштарас енĕпе дотацилессине уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук шучĕпе кăштах ылмаштарасси çинчен.

3. Депутатсен районти Пухăвĕн 2009 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнчи С-36/9 № «Муркаш районĕн муниципаллă пурлăхне 2010 çулта приватизацилемелли прогноз планĕ (программи) çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

4. Ачасен хушма вĕрентĕвĕн «Ачасен Муркашри искусство шкулĕ» муниципаллă вĕрентÿ учрежденине Ф.С. Васильев ятне парасси çинчен.

**Кĕскен**

## Малтисенчен тĕслĕх илесчĕ

Районти предприятисен производство калăпăшĕ январь – август уйăхĕсенче 694,1 млн. тенкĕпе танлашнă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан вара ку кăтарту 175,7 процент. «Сеспель» акционерлă хупă общество, «Моргаушмежрайгаз», «Сундырское» тата «Моргаушское» коммуналлă хуçалăхсем тухăçлăрах ĕçлени курăнать. «Сеспель» акционерлă хупă обществăн тухăç калăпăшĕ 361,3 млн. тенкĕпе танлашать. Кунта тупăш илесси виçĕ хут ÿснĕ е çакă 372,6 процент. «Моргаушмежрайгаз» филиалĕнчи тупăш 37,5 млн. тенкĕ, ÿсĕм калăпăшĕ 120,8 процент. «Моргаушское» коммуналлă хуçалăх 12,1 млн. тенкĕлĕх тупăш тунă, çакă 104,4 процентпа танлашать, «Сундырское» коммуналлă хуçалăхри тупăш 11,6 млн. тенкĕ е çакă 116,7 процент пулать. «Сеспель» акционерлă хупă обществăра çулталăк пуçланнăранпа автомобильсен 222 çурма прицепне туса кăларнă. Ял хуçалăх предприятийĕсем хăйсем туса илнĕ продукцие 222,5 млн. тенкĕлĕх сутнă е çакă 99,8 процентпа танлашать. Районта 32 организаци тÿлевлĕ услуга парать, ку 56,6 млн. тенкĕпе танлашать. Çакă иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан 131,3 процент пулать. Ваккăн сутакан тавар çаврăнăш январь – август уйăхĕсенче 432,1 млн. тенкĕпе танлашать. Ку кăтарту 16,3 процент чухлĕ ÿснĕ. Муркаш райповĕ 219,7 млн. тенкĕлĕх, Мăн Сĕнтĕр райповĕ 143,6 млн. тенкĕлĕх продукци реализациленĕ. Обществăлла апатлану калăпăшĕ 42,6 млн.тенкĕпе танлашать е çакă 111,8 процент пулать.

**Хамăр инф.**

**Саламлатпăр**



Уважаемая **Тамара Афанасьевна**!

В замечательный день Вашего рождения примите сердечные поздравления с юбилеем! Желаем Вам благополучия, надежд, стабильности, неиссякаемого оптимизма. Будьте счастливы, здоровы. Пусть на душе у Вас будет легко и спокойно, в Вашем доме - тепло и уютно!

**Коллектив Центра занятости населения Моргаушского района.**



Юратнă аннене, асаннене, хунямана, аппана, хаклă тăвана – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Нина Васильевна КИСЕЛЕВĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Пархатарлă кун-çул, çăл куç пек тапакан вăй-хал, иксĕлми телей, вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх сунатпăр. Сĕтелÿ çăкăр-тăвартан, кил-çурту тăвантан ан татăлтăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн Турра тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсем, кĕрÿшĕсем, мăнукĕсем, Захаровсен, Вязовсен, Алексеевсен çемйисем.**

# Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусем тавра

## Пĕрлехи информаци кунĕнчен

***Районта черетлĕ информаци кунĕ сентябрĕн 15-мĕшĕнче иртрĕ. Унăн теми – социаллă пĕлтерĕшлĕ продуктсен хакĕсене сăлтавсăрах ӳстерсе ярассине чарса лартассипе Чăваш Республикинчи влаç органĕсем туса ирттерекен комплекслă мерăсем, обществăлла инфраструктура объекчĕсене хĕллехи хутса ăшăтмалли тапхăр валли хатĕрлесе çитересси, Чăваш Енри муниципаллă йĕркелӳсенче ял хуçалăх ярмăрккисене йĕркелесси, республикăра 2010 çулхи халăх çыравне хатĕрленсе кĕтсе илессипе туса ирттерекен ĕçсем пирки. Çатракасси, Хорнуй, Мăн Сĕнтĕр, Чуманкасси, Оринин ял тăрăхĕсен территорийĕсенчи предприятисемпе организацисенче çав кун ятарлă ушкăнсемпе пĕрле ЧР патшалăх ветеринари службин ертӳçи В.К. Тихонов, «РФ Юстици министерствин Чăваш Республикинчи суд экспертизин лабораторийĕ» патшалăх учрежденийĕн пуçлăхĕ Л.П. Морозов, РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи пайĕн управляющийĕ Р.А. Кондратьева, ЧР Президент администрацийĕн специалисчĕ В.И. Смирнова пулчĕç, ĕçлекенсемпе тĕл пулчĕç, çынсене хумхантаракан ыйтусем çине хуравларĕç.***



Пирĕн района килнĕ информаци ушкăнĕн ертӳçи, Чăваш Республикин ветеринари службин ертӳçи В.К. Тихонов район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа пĕрле чи малтан **«Свобода» хуçалăхра** пулчĕ. Кăçалхи çав тери шăрăх çанталăк ку хуçалăха та шар кăтартни унăн ертӳçин В.К. Ананьеван сăмахĕсенчен те яр уççăнах курăнчĕ. Сивĕ хĕле пула кĕрхи культурăсем пĕтĕмпех пĕтни çитмерĕ – шăрăх çанталăк тепĕр хут акнă лаптăксене те ӳсме май памарĕ. Апла пулин те хуçалăх ĕçченĕсем алла усмаççĕ, умри тĕллеве пурнăçлассишĕн тăрăшаççĕ. Çăмăлах мар пулин те выльăхсен йышне чакарас мар тесе тĕллев лартнă кунта. Выльăх апатне кăçал ытти çулхи пек çителĕклĕ хатĕрлеме май пулманран тĕрлĕ майсем шыраççĕ. Выльăхсене валли 300 тонна тырă туяннă.

– Вĕсене çителĕклĕ тăрантарма тепĕр 500 тонна туянмалла ăна пирĕн, – тет Владислав Кириллович.

Хуçалăхра паян темиçе çул каяллахи улăма та хĕле валли тюксем туса хураççĕ. Улăм питĕ лайăх упраннă, пахалăхĕ чакман. Çанталăк условийĕсене кура нумай çул ӳсекен курăксенчен утă хатĕрленине Владимир Карлович ырларĕ.

– Кăçалхи условисенче утă хатĕрлеме пултарни питĕ лайăх, – терĕ.

Унтан пурте пĕрле хуçалăхăн çĕр улми уйĕнче пулса курчĕç. Унта хĕрӳ ĕç пыратчĕ. Çатракасси-Кашмаш тăрăхĕнчи çынсемпе пĕрле кунта Шетмĕпуç таврашĕнчен килнисем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Тухăçĕпе ытти çулхисемпе танлаштарма çук пулин те, çĕр улми вăрлăх лăх хăйсенех çитме кирлĕ.

–Колхоз пулсан пурăнатпăр, – хăйĕн шухăшне пĕлтерет Г.И. Иванова.

Владимир Карловичпа Юрий Александрович пĕрлехи инфомаци кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусем тавра калаçнă май хăйсен чунне ыраттаракан ыйтусене те пачĕç «иккĕмĕш çăкăр» уйĕнче ĕçлекенсем. Район пуçлăхĕ хăйĕн сăмахĕнче шăрăх çанталăка пула тӳснĕ тăкака саплаштарма хуçалăхсене патшалăх пулăшнине, ку тĕллевпе пирĕн района та укçатенкĕ килнине палăртрĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕне аталантарас ĕçре те çакăн пек пулăшу пулмалла. Кунта вара килти хушма хуçалăхсене те ку тĕллевпе пулăшу ытлашши пулас çук: вĕсене те пулăшма пулмасть-ши, текен шухăша республика шайне сĕнме палăртрĕç тĕл пулура. Хуçасăр йытăсемпе тилĕсем килти хур-кăвакалшăн хăрушлăх кăларса тăратнине те çак кунсенчех вырăнта татса памаллине палăртрĕç. «Ĕç ветеранĕ» ята парассипе çыхăннă тата ытти ыйтусен хуравĕсене те илчĕç уйра ĕçлекенсем.

Унтан информаци ушкăнĕ Кашмашри сысна ферминчи лару-тăрупа паллашрĕ. 1200 пуç вырнаçмалăх ферма хĕле хатĕр. Кунта сыснасене «БиоРост» компани туса кăларакан биодобавкăсене параççĕ. Усси куçкĕретех: сыснасен талăкри ӳт хушаслăхĕ пысăк. Ку çеç те мар. Çав хушма апата ĕнесене пама пуçланăранпа сăвăм та хăпарнă кунта.

Владимир Карлович Кашмашсен ăратлă сыснисене Тутарстанран та, Самара тата ытти облаçсенчен те хаваспах килсе туяннипе питĕ кăмăллă пулнине палăртрĕ.

Тата çакна та каласа хăвармалла. Çĕнĕ технологипе ĕçлекен çак сарайĕнче 1200 пуçа 2 çын пăхать. Кăçал апрель уйăхĕнче кунта Чăваш ял хуçалăх академийĕн аспиранчĕсем сăнав ирттереççĕ: сыснасен рационне фруктоза хушни усси мĕн чухлĕ пулнине тĕпчеççĕ. Опытăн малтанхи тапхăрĕ çакă ӳт хушаслăх çине лайăх витĕм кӳнине кăтартса панă.

Ферма ĕçченĕсем территорие тирпей-илем кĕртме те манмаççĕ. Ферма картишĕнчи чечексем куçа илĕртсе лараççĕ. Çитес çуркунне ферма картишĕнче сухан тата ытти пахча çимĕç лартма та ĕмĕтленеççĕ кунта ĕçлекенсем. Çуралнă кунра эпир магазинта туяннă хитре чечексен çыххине тулли кăмăлпа илме питĕ кăмăллине пĕлетпĕр. Чăваш Республикин ветеринари службин ертӳçишĕн В.К. Тихоновшăн ферма территорийĕнчи клумбăсенче çитĕннĕ астра тата ытти илемлĕ чечексен çыххине «Свобода» хуçалăхĕнчи ĕçтешĕсенчен йышăнни çуралнă кунĕ ячĕпе чăнчăн кĕтмен парнех пулчĕ.

Юлашкинчен информаци ушкăнне кĕрекенсем пурте пĕрле пуçтарăнса халăхпа ирттернĕ тĕл пулусенче çуралнă ыйтусене татса памаллине сӳтсе яврĕç, Пĕрлехи информаци кунне пĕтĕмлетрĕç.

**Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн территорийĕнче** район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ В.А. Калинин, финанс пайĕн пуçлăхĕ Р.И. Ананьева пулчĕç. Ушкăн çитсе курнă пĕрремĕш объект вăл «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество пулчĕ.

Çак вăхăта кунта 73 çын вăй хурать. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан продукци туса кăларасси кăшт чакни палăрать пулин те, предприяти районта ăнăçлă ĕçлесе пыраканнисен шутĕнче. Юлашки вăхăтра предприятире юсав ĕçĕсем туса ирттересси, çĕнĕ производство линийĕсем хута ярасси пирки çине тăрса ĕçлени куç кĕрет. Çынсем те хăйсен ĕçĕхĕлĕпе кăмăллă.

Юлашки вăхăтра ĕçе кĕртнĕ çĕнĕлĕхсенчен çавсене асăнса хăвармалла. Çăкăр-булка изделийĕсене халĕ çĕнĕ кăмакасенче пĕçерсе хатĕрлеççĕ. Çĕнĕ кăмакасенче тесе калани те тĕрĕсех мар пулĕ. Кашни продукци тĕсĕ валли уйрăм программа пăхса хунă.

Продукци хатĕрлеме шыва тасатма ятарлă фильтрсемпе усă курма тытăннă. Ку вара кăмакасемпе усă курассин тапхăрне ӳстерме май парать.

Экономика кризисĕн вăхăтĕнче укçа-тенкĕне перекетлеме пĕлни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Хальхи вăхăтра предприятире 4 газооператор вăй хурать пулсан, вĕсемех хуралçă тивĕçĕсене те пурнăçлаççĕ.

Предприятире çăкăр-булка изделийĕсемсĕр пуçне тĕрлĕ пылак шыв та хатĕрлеççĕ. Малтанхи вăхăтра вĕсем валли пластик кĕленчесене туянмалла пулнă. Халĕ вара тĕрлĕ формăллă пластик кĕленчесене ятарлă оборудованипе вырăнтах туса хатĕрлеççĕ. Меллĕ те, перекетлĕ те.

Мăн Сĕнтĕр райповĕн суту-илӳ предприятийĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма та кăмăллă пулчĕ. Вĕсем те район шайĕнче кăна мар, республикăра та малтисен шутĕнче. Кăçалхи ĕç кăтартăвĕсем те çавна çирĕплетеççĕ. Коллектив кăçалхи январь–август уйăхĕсенче ваккăн тавар сутассипе те, обществăлла апатлану енĕпе те иртнĕ çулхи çав вăхăтри шайран 13-шер процент ытла ăнăçлăрах ĕçленĕ.

Хальхи суту-илӳ предприятийĕсене çĕнетсе юсасси, вĕсене çĕнĕ сăн кĕртесси, тавар туянакансен ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтересси çине ытларах тимлĕх уйăрма тăрăшаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ районĕпе ваккăн тавар сутассин калăпăшĕнче Мăн Сĕнтĕрсен пайĕ 30 процентпа танлашать. Хăш-пĕр çĕрти пек кăçалхи шăрăх та типĕ çанталăкпа сăлтавласа магазинсенче социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсен хакĕсене ӳстерсе яманни те тавар туянакансемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Тĕл пулусенче, паллă ĕнтĕ, ыйтусем те пулмарĕç мар. Мăн Сĕнтĕрте пурăнакансене çамрăк çемьесене, юрăхсăра тухнă çурт-йĕрте пурăнакансене хваттерсемпе тивĕçтересси, ачасем валли ача сачĕ, Культура çурчĕ тăвасси, ял урамĕсенчи çулсене юсаса йĕркене кĕртесси, хваттерсенче юсав ĕçĕсем туса ирттерессси, ялсенче пурăнакансене ĕçмелли шывпа тивĕçтересси ыйтусем кăларса тăратаççĕ. Вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене вара çакăнта пурăнакансен пĕрлехи вăйĕпе ăнăçлăрах татса пама май пурри паллă.

**Л. ПАВЛОВА,**
**В. ШАПОШНИКОВ.**
**Л. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Налук ыйтăвĕсемпе

# «Конвертри» ĕç укçи пирки

***Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2009 çулхи июлĕн 24-мĕшĕнче йышăннă «О страховых взносах в Пенсионный фонд Российской Федерации, Фонд социального страхования Российской Федерации, Федеральный фонд обязательного медицинского страхования и территориальные фонды обязательного медицинского страхования» 212 № Федераллă саккун вăя кĕчĕ. Çавна май РФ Налук кодексĕн «Единый социальный налог» пайне пăрахăçлана.***

Çĕнĕ саккунпа килĕшӳллĕн страховани взносĕсене администрацилессине РФ Пенси фончĕ тата Социаллă страховани фончĕ çине шанна. Апла пулин те Раççей федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн тĕп тивĕçĕсенчен пĕри ниçта та палăртмасăр ĕç укçи тӳленĕ тĕслĕхсене тупса палăртасси пулса тăрать.

Ку çакăнпа çыхăннă. Налук тӳлесе тăракан ĕç паракансенчен нумайăшĕ хăйсен ĕçченĕсене ĕç укçи чи пĕчĕк виçерен те сахалрах тӳлет. Апла пулсан ĕç укçине «конвертсемпе» тӳлекенсем, налук тӳлессинчен пăрăнакансем те пулма пултараççĕ. Ку вара пĕтĕмпех ĕçлекенсен социаллă хӳтлĕхĕ çине тӳнтерле витĕм кӳрет.

Ĕç укçине конвертсемпе илсе тăракансем халех ĕнтĕ вăхăтлăх ĕçлейменшĕн пособисем, отпуска кайнăшăн, ĕçрен тухнă чухне укçа, хваттерсем туяннă чухне налук тӳлесси енĕпе, тӳлевлĕ вĕреннĕ, медицина пулăшăвĕпе усă курнă, кредитсем илнĕ чухне çăмăллăхсемпе усă курма пултараймаççĕ. Кунпа пĕрлех ĕç укçине «конвертсемпе» тӳлекенсем хăйсен ĕçченĕсен пулас пенсине те самай чакараççĕ. Мĕншĕн тесен кун пек чухне Пенси фончĕ çине взноссем куçмаççĕ.

Инспекци çавăн пирки те асăрхаттарать. Енчен те ĕçлекен çын пĕр-пĕр тупăш илнĕ, анчах та уншăн налук тӳлемен пулсан, çак тупăша вăл тепĕр çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнчен кая юлмасăр хăй пурăнакан вырăнта декларацилеме тата уншăн июлĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр налук тӳлеме тивĕç.

Аса илтеретпĕр: 2010 çулта уйăхри вăтам ĕç укçи 4330 тенкĕпе танлашать. Пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк минимум вара кăçалхи иккĕмĕш кварталта ĕçлекен кашни çын пуçне вăтамран 5042 тенкĕ пулчĕ.

Енчен те эсир ĕç укçи тӳлессипе йĕркене пăснă тĕслĕхсене пĕлетĕр пулсан ун пирки шанăç телефонĕпе 2–30–64 номерпе шăнкăравласа пĕлтерме пултаратăр. Çырусене çак адреспа ямалла: Етĕрне хули, Çĕнтерӳ 30 çул тултарнин урамĕ, 2 а çурт.

**Н. ОРЛОВА,**
**камераллă тĕрĕслевсен пайĕн пуçлăхĕ.**

## Официально

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**

**14 сентября 2010 года**
**№86/2**

**Об утверждении графика проведения совместных встреч кандидатов в органы местного самоуправления на территории Моргаушского района Чувашской Республики**

В соответствии со статьей 45 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» и статьей 28 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» Моргаушская территориальная избирательная комиссия **р е ш и л а:**

1. Утвердить график проведения совместных встреч кандидатов в органы местного самоуправления на территории Моргаушского района Чувашской Республики согласно приложению.

2. Направить настоящее решение для опубликования.

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии**
**А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии**
**В.Н. ФОМИНА.**

Приложение
к решению Моргаушской территориальной избирательной комиссии от 14.09.2010 г. № 86/2

**ГРАФИК**
**проведения совместных встреч кандидатов в органы местного самоуправления на территории Моргаушского района**

| Сельское поселение | Дата проведения | Место проведения встречи | Время проведения |
|---|---|---|---|
| Александровское | 21 сентября 2010 г. | Васькинский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Юськасинское | 21 сентября 2010 г. | Юськасинский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Орининское | 22 сентября 2010 г. | Орининский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Кадикасинское | 22 сентября 2010 г. | Кадикасинский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Ильинское | 23 сентября 2010 г. | Тренькинский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Ярабайкасинское | 23 сентября 2010 г. | Ярабайкасинский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Москакасинское | 28 сентября 2010 г. | Москакасинский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Сятракасинское | 28 сентября 2010 г. | Кашмашский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Тораевское | 29 сентября 2010 г. | Тораевский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Юнгинское | 29 сентября 2010 г. | Юнгинский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Чуманкасинское | 04 октября 2010 г. | Чуманкасинский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Моргаушское | 05 октября 2010 г. | Районный ДК | 19 час. 00 мин. |
| Хорнойское | 06 октября 2010 г. | Хорнойский СК | 19 час. 00 мин. |
| Ярославское | 06 октября 2010 г. | Ярославский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Большесундырское | 07 октября 2010 г. | Большесундырский СДК | 19 час. 00 мин. |
| Шатьмапосинское | 07 октября 2010 г. | Шатьмапосинский СДК | 19 час. 00 мин. |

Ыран – Вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсен кунĕ

# Пĕрлехи пуянлăха упрама пĕлесчĕ

***Çут çанталăк илемлĕхĕ пирки, тăван тавралăха упрама кирли çинчен нумай калаçатпăр-тавлашатпăр, анчах эпир тавлашнинчен пирĕн тавралăх пуянланмастех. Ĕçсене çиччĕ виçсе пăхакан çын хутшăнмасăр нимĕнле ырăлăх та куç умне пулманни палăрать. Çавăнпа та паянхи обществăра пире хупăрласа тăракан çут çанталăк ыйтăвĕ халăх умне çивĕчрех те çивĕчрех тухса тăрать. Нумай ыйтусене кая хăвармасăр татса памалли те яр уççăнах курăнать. Çакна кăçалхи шăрăх кунсенче Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин территорийĕсенчи вăрмансем çунни, кунта вăй илнĕ «хĕрлĕ автан» нумай ялсене кĕл туни çирĕплетсе парать.***

***Ыран – Вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсен кунĕ. Мĕнле шухăш-кăмăлпа кĕтсе илеççĕ-ха хăйсен професси уявне вăрман ĕçченĕсем? Çак ыйту çине хурав шыраса редакци сотрудникĕ Анатолий БЕЛОВ Ильинка лесничествин лесничийĕпе Анатолий Калистратович КАСЬЯНОВПА тĕл пулса калаçнă, вăрман хуçалăхĕнче юлашки вăхăтра пулса иртекен улшăнусемпе кăсăкланнă.***

**– Анатолий Калистратович, Сире тата эсир ертсе пыракан коллектива Вăрман ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе саламлатăп. Эсир пурнăçлакан ĕç районшăн та, республикăшăн та, Раççейшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ.**

– Саламшăн тата пирĕн ĕçе çавнашкал хакланăшăн пысăк тав. Хамăра шаннă ĕçе эпир ответлăха туйса пурнăçлама тăрăшатпăр. Ĕçĕмĕре вăрман Кодексĕпе килĕшӳллĕн йĕркелесе пыратпăр, вăрманпа усă куракансем саккунсене пăхăнса тăнине тĕплĕн тĕрĕслетпĕр. Вăрман вăл – халăх пуянлăхĕ. Çавăнпа та унпа пурин те пĕрешкел тирпейлĕ усă курмалла. Хамăра йĕрке хуралçисем, пушар хуралĕнче вăй хуракансем, массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсем пулăшнăран вăрманти йĕркелĕхе тивĕçлĕ шайра тытма май пур. Ку вăл малашне те çаплах пуласси пирки эпĕ иккĕленместĕп.

**– Пирĕн тăрăхри вăрмансене 1979-1980 çулсенчи хĕллехи шартлама сивĕ пысăк сăтăр турĕ теççĕ. Иртнĕ хĕл сивви те витĕм кӳчĕ пулĕ-ха? Вăрмансем нумай сиенленчĕç-ши?**

– Сиенсем тенĕрен, эсир каланă хĕл кунĕсем пирĕн тăрăхри юмансене самай шар кăтартрĕç. Çакăн хыççăн вăрмансене массăллă касасси тата çĕнĕ вăрмансене пысăк лаптăксем çинче лартса хăварасси вăй илчĕ. Çак ответлă ĕçе вăхăтра тата тивĕçлĕ пахалăхпа туса ирттерни паян çамрăк вăрмансем çине киленсе пăхтарать. Лесничествăри вăрман хуçалăхне çĕнетсе йĕркелессинче иртнĕ çулсенче кунта лесничий пулнă Анатолий Петрович Яковлевăн тӳпи те пысăк. Шăпах çак çулсенче лесничествăн бази тĕрекленсе çитрĕ, унăн производство кăтартăвĕсем курăмлă ӳсрĕç.

**– Тата камсене ырăпа асăнма пултаратăр? Вăл çулсенче паянхи Ильинка лесничестви икĕ лесничествăран тăнă-çке. Эсир вара Малиновка лесничествинче ĕçленипе пĕрлех чылай хушă Ильинка лесничествине те ертсе пытăр.**

– Çак таранччен кашни вăрманçă тăван тавралăха пуянлатассипе тата ăна илем кӳрессипе епле ĕçлени куç умĕнче. Хамăр енре юманлăхсене чĕртессипе кам епле ĕçленине çапла палăртассăм килет. Çак ĕçре тăрăшса пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлнă А. Селюшкин, В. Анисов, Н. Пантелеймонов вăрманçăсем хăйсенчен ырă ят хăварчĕç, кайран вăй хунă тата паян та вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекен Г. Флегонтов, В. Николаев, С. Николаев, И. Игнатьев, В. Голубев, В. Колбасов, М. Моисеев, Л. Николаев вăрман хуçалăхĕн тĕсĕ пулса тăраççĕ.

Виçĕ çул каялла пысăкланнă пирĕн лесничество паян 10316 гектар çинчи вăрмансене пĕрлештерсе тăрать. Май килнипе усă курса хамăр вăрман хуçалăхĕнче ĕçленĕ ветерансене, вăрман хуçалăхне аталантарма пулăшнисене тата халĕ те çак ĕçрен айккинче тăманнисене, паян вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсене, вĕсен çемйисене, вăрман хуçалăхĕн аталанăвне пысăк тӳпе хывакан шкул ачисене Вăрман хуçалăхĕн ĕçченĕсен кунĕпе саламлатăп, ырлăх-сывлăх, пуçăннă ĕççене вĕçне çитерме телей те ăнăçу сунатăп.

Аукцион

Извещение о проведении открытого аукциона

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе (далее - аукцион), открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров аренды земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: **постановления администрации Моргаушского района Чувашской Республики «О проведении открытого аукциона на право заключения договоров аренды земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики» от 15.09.2010 №711, «Об утверждении перечня земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района, выставляемых на торги (аукцион, конкурс)» от 10.09.2010 № 695.**

Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: **429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.**

Контактные лица: **Петров А.В., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66, Колесникова М.Н., главный специалист-эксперт отдела, тел.: 62-5-99**

Характеристика объектов аренды:

Лот №1 – **земельный участок с кадастровым номером** 21:17:281001:656**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для ведения прудового хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, участок расположен северо-западной части кадастрового квартала 21:17:281001, общей площадью 10762.00 кв.м.**

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) **– 2099.00 (две тысячи девяносто девять) рублей.**

Сумма задатка **– 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Шаг аукциона **– 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Срок аренды **– 5 лет.**

Лот №2 – **земельный участок с кадастровым номером** 21:17:140301:136**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, д. Шептаки, ул. Центральная, общей площадью 3400.00 кв.м.**

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) **– 1101,86 (одна тысяча сто один) рубль 86 копеек.**

Сумма задатка **– 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Шаг аукциона **– 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Срок аренды **– 5 лет.**

Лот №3 – **земельный участок с кадастровым номером** 21:17:080901:472**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для ведения сельскохозяйственного производства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, участок расположен северной части кадастрового квартала 21:17:080901, общей площадью 469018.00 кв.м.**

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) **– 12807.00 (двенадцать тысяч восемьсот семь) рублей.**

Сумма задатка **– 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Шаг аукциона **– 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Срок аренды **– 5 лет.**

Лот №4 – **земельный участок с кадастровым номером** 21:17:072501:1192**, категории «земли сельскохозяйственного назначения», разрешенный вид использования «для ведения сельскохозяйственного производства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:072501:1192, общей площадью 128687.00 кв.м.**

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) **– 4850.00 (четыре тысячи восемьсот пятьдесят) рублей.**

Сумма задатка **– 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Шаг аукциона **– 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Срок аренды **– 5 лет.**

Лот №5 – **земельный участок с кадастровым номером** 21:17:060402:160**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для установки и эксплуатации шиномонтажа», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Ленина, общей площадью 87 кв.м.**

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) **– 7640.00 (семь тысяч шестьсот сорок) рублей.**

Сумма задатка **– 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Шаг аукциона **– 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Срок аренды **– 5 лет.**

Лот №6 **– земельный участок с кадастровым номером 21:17:020201:148, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:020201, общей площадью 539 кв.м.**

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) **– 380.00 (триста восемьдесят) рублей.**

Сумма задатка **– 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Шаг аукциона **– 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Срок аренды **– 5 лет.**

Лот №7 **– земельный участок с кадастровым номером 21:17:070301:180, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для установки торгового павильона», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:070301, общей площадью 20 кв.м.**

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) **–540.00 (пятьсот сорок) рублей.**

Сумма задатка **– 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Шаг аукциона **– 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.**

Срок аренды **– 5 лет.**

Информация о проведении аукциона:

Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. **Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 313 по рабочим дням по адресу организатора аукциона со дня опубликования данного извещения.**

2. **Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – финансовый отдел администрации Моргаушского района (Администрация Моргаушского района), ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123000012, р/счет: 40302810775140000005 в Чувашском ОСБ №8613 г. Чебоксары, кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (задаток на участие в аукционе), дату аукциона, номер лота.**

**Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке**, **в течение 3-х банковских дней со дня проведения аукциона.**

3. **Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц - для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность - для физических лиц.**

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Срок окончания приема заявок на участие в аукционе – 18 октября 2010 года.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с проектом договора аренды земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №313.

Дата, время и порядок осмотра земельного участка на местности: по предварительной записи в отделе имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района после публикации данного извещения.

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров аренды земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку на участие в аукционе.

**Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании Комиссии - 19 октября 2010 г. в 15.00 часов по адресу организатора аукциона.**

**Определение участников аукциона состоится 21 октября 2010 года по месту нахождения организатора конкурса: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж.**

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену годового размера арендной платы.

По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора аренды земельного участка.

Договор аренды земельного участка заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола.

**Время проведения открытого аукциона** 21 октября 2010 года **(по московскому времени):**

Лот №1- 9.00, Лот №2 – 9.20, Лот №3 – 9.40, Лот №4 – 10.00, Лот №5 – 10.20, Лот №6 -10.40, Лот №7 – 11.00

Уяв кунĕ ячĕпе




# Туслăх вăрманĕн хуçи

Ĕç ветеранĕ манăн ĕç кабинетне ирхи сакăр сехет çурăрах кĕрсе тăчĕ. «Вăрманçăсен уявĕ çывхарать. Çавна май Ильинка участок лесничествин Ильинка-Тренккă-Хунтăкасси тавра-шĕнчи вăрман хуçалăхне пырса хакласамăрччĕ. Ку тăрăхра та тăван тавралăха юратакан çынсем пурăнаççĕ», – терĕ Петр Ильич Андреев ĕç вăхăтĕнче чăрмантарнăшăн каçару ыйтса.

– Вырăнти уйрăмлăхсене кура пирĕн енри çынсем улма-çырла йывăççисем лартса ӳстерессипе тăрăшса ĕçлеççĕ. Çавăнпа пĕрлех вăрмана та аталантараççĕ. Кĕр çитсен вара – паян шăпах çак вăхăт – çывăхри вăрмансенче кунтăк йăтса кăмпара çӳрекенсем хăйне евĕр илем кăшăлĕ. Çавăн чухне çеç вăрман çыншăн мĕнле пĕлтерĕшли куç умне туллин тухать, – шăкăл-шăкăл калаçать ĕç ветеранĕ.

Тăван тавралăх илемĕ пирки çĕкленӳллĕ каçлаçма Петр Ильичăн сăлтавĕ те пысăк. Ăна тăвассишĕн вăл хăй ĕç ĕмĕрĕн 42 çулне панă.

П. Андреев Хунтăкасси ялĕнче колхозник çемйинче çуралса ӳснĕ. Атăл хĕрринче çитĕннĕ, çу кунĕсенче шыва кĕме аслă юхан шыва çӳренĕ арçын ачанне анаталла-тăвалла иртекен карапсем çинче ĕçлекен штурмансемпе матроссен илемлĕ форми пĕчĕккĕллех пуçне çавăрнă. Çавăнпа Петьăн пурнăçри пĕрремĕш ĕмĕчĕ – штурман пуласси. Ăна пурнăçа кĕртме ял ачи 1950-мĕш çулсенче икĕ хутчен юхан шыв училищисене (Звениговăра тата Чул хулара) вĕренме кĕме экзамен тытать. Йăлтах йĕркеллĕ, анчах юн пусăмĕ пысăкки ял ачин çутă ĕмĕтне ура хурать.

– 1959 çулта Чул хулари юхан шыв училищине вĕренме кĕрсен 3 кун хыççăн юн пусăмне пула мана «отбраковали». Штурман пулас ĕмĕт вĕçсе кайрĕ. Киле таврăнма та аван мар. Ачаллах вăрмансенче нумай чупса çӳренĕрен çак вăхăта Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнче «Вăрман хуçалăхĕ» факультет уçăлнине пĕлнĕччĕ. Пăрахутпа Ильинка таран анма билет илтĕм те нарсем хыçне пытанса тăван пристаньрен иртсе кайрăм. Сĕнтĕрвăррине авăн уйăхĕн 18-мĕшĕнче çитрĕм. «Эпĕ вĕренме килтĕм», – тетĕп секретаре тĕлĕнтерсе. Вăл ман пирки директора пĕлтерсен техникум ертӳçи манăн Чул хулари экзамен хучĕсене пăхса: «Саппасри пулма килĕшетĕн-и?» – терĕ. Килĕшрĕм те эпĕ хамăр ушкăнра 35-мĕш студент пулса тăтăм. Икĕ уйăх хушшинче нумайăшĕ пăрахса кайрĕ. Техникумран вара эпир 19-ăн вĕренсе тухрăмăр, – иртнине кăмăллăн аса илет Петр Ильич.

Хыççăн тăван ен. Малтанах Атăл леш енчи, 1960-1970 çулсенче Çурçĕрти лесничествăра, 1966-1971 çулсенче вăрман мастерĕнче, лесничий çумĕнче ĕçлесе çулсерен 500-шер гектар хыр-чăрăш лартнă. Кунта ĕçлекенсене вăрман варринче кино кăтартни те ветеран асĕнчен тухмасть. «Çав лаптăксем кăçалхи пушарсенче çунса кайни мана питĕ хурлантарать», – терĕ Петр Ильич.

1971 çулта Ильинка лесничествин питомник мастерĕ пулса ĕçлеме пуçланă çамрăк кĕске хушăрах питомника 15 сотăкран 15 гектара çитерет. 70-мĕш çулсем пуçламăшĕнче юман питĕ кирлĕ пулнăран ăна питомникра 5 гектар акса ӳстерме пуçланă. Ку ĕçре лашапа та суха пуçпе юман йĕкелĕ акни ветеранăн асĕнчен паян та тухмасть. Çакăнта питомник маçтăрне Ильинкăри, Шомикри, Москакассинчи, Атапайĕнчи шкул ачисем самай пулăшнă. «Ильинкăра ачасене биологипе вĕрентекен Нина Никитична Пайманова ачасене ĕçлеттернĕ хушăрах вĕрентни паян та куç умĕнче», – терĕ пулăшушăн тав сăмахĕ каланă май Петр Ильич.

Вăрманçă ял хыçĕнчи вăрманпа çырма кĕтессинче 1972 çулта пĕр лаптăк кедр йывăççисем лартса хăварать. Ырă ĕç ырă çимĕçсем парать: кăçал çав кедрсем пĕрремĕш хут ял ачисене йĕкелпе савăнтарнă. Ку вырăнти вăрмана П. Андреев иртнĕ çулсенче хăй тăрăшнипе 75 соткăна çитернĕ. Ăна лартма Ильинка шкул ачисемпе пĕрле кӳршĕллĕ Çармăс Республикинчи Токари ялĕнчи шкул ачисем те пулăшнăран унăн ячĕ те Туслăх вăрманĕ. Петр Ильич вăрманçă ĕмĕтĕнче çак вырăнта Чăваш тата Çармăс Республикисен Президенчĕсене тĕл пултарасси.

– Вăрман тăрăх çӳреме юрататăп. Хам çырса пынă тăрăх вăрман хуçалăхĕнче ĕçленĕ чух хамăр таврари вăрмансемпе ĕшнесем тăрăх кунсерен эпĕ 30-40 километр çуран утнă. Çакăншăн паян савăнатăп кăна, – терĕ хастар вăрманçă хăйĕн пурнăç юратăвне халалласа çырнă сăввипе паллаштарнă май.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

